27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮЛЬ 28 ЭРНЕКУН 147 (6642) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ГОВОРОВА

ЛЕНИНГРАД фрончĕн ҫарĕсем, НАРВА хули районĕнче наступлени пуҫласа ярса, тăшманăн вăйлă ҫирĕплетнĕ, шалаллă инҫене кайнан оборонине татнă та, ҫавăрса илмелли ăста маневр туса тата фронтран атакăласа, паян, июлĕн 26-мĕшĕнче, НАРВА хулипе крепоҫне — нимĕҫсен оборонин тĕреклетнĕ пахаа районне, Эстони пырса кĕмелли ҫулсене хупласа тăраканскерне, — штурмласа туртса илнĕ.

НАРВА хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, СТАРИКОВ генерал-лейтенантăн, РОМАНЕНКО генерал-майорăн, БУРАКОВСКИЙ генерал-майорăн, ТРУБАЧЕВ генерал-майорăн, БАТЛУК генерал-майорăн, ЯКУТОВИЧ генерал-майорăн, КОЗИЕВ генерал-майорăн, КАЗУНЕНКО полковникăн ҫарĕсем; артиллери генерал-майорĕн КАЗАКОВАН, артиллери генерал-майорĕн ПЯДУСОВАН, БАГДАСАРЯН полковникăн, ШТЕЙН полковникăн, БОНДАРЕВ полковникăн, ГНИДИН полковникăн, АРУ-НАУШИНСКИЙ полковникăн, БОГУШЕВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ЗАЗИМНАН, МИРОНОВИЧ полковникăн, БАРИЛОВ подполковникăн, КУЗИН подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн РЫБАЛЬЧЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн АНДРЕЕВАН, авиаци генерал-майорĕн ЩЕРБАКОВАН, МАТВЕЕВ полковникăн, ХАТМИНСКИЙ полковникăн, ГРЕСЬНОВ полковникăн, КУРОЧКИН полковникăн летчикĕсем; ЦВАНГЕР полковникăн, ВАСИЛЬКОВ подполковникăн, ФОМЕНКО майорăн, АФАНАСЬЕВ подполковникăн, ВОРОНОВ капитанăн саперĕсем; БАХИЛИН полковникăн, ПОНОМАРЕНКО подполковникăн, ШУБИН подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, Нарва хулине крепоҫне туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене «НАРВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 26-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, инҫĕр ҫирĕм тăвата тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Ленинград фрончĕн паттăр ҫарĕсене, НАРВА хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, НАРВА хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТăВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлĕн 26-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота ҫав тери хăвăрт атакăланă хыҫҫăн, ДЕМБЛИН (Ивангород) хулипе крепоҫне — пысăк чугун ҫул узелне тата нимĕҫсен ВИСЛА шывĕ ҫинчи оборонин тĕреклетнĕ хăватлă пунктне — штурмласа туртса илнĕ.

ДЕМБЛИН хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ЧУЙКОВ генерал-полковникăн, ГЛАЗУНОВ генерал-лейтенантăн, ШЕМЕНКОВ генерал-майорăн ҫарĕсем; РАДЗИЕВСКИЙ генерал-майорăн, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ДУБОВОЙАН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ВЕДЕНЕЕВАН, АБРАМОВ полковникăн, КОПЫЛОВ полковникăн, СТУКОВ полковникăн, МИРВОДА полковникăн, ПОТАПОВ полковникăн, ЛИБЕРМАН полковникăн, КРЕВС полковникăн, МАКАРОВ подполковникăн, ЧЕРЕНКИН подполковникăн, ГУРЕНКО майорăн, БАРДНИКОВ майорăн, БУДАРИН майорăн, ГОРБАТЕНКО майорăн, СТЕРЛИКОВ капитанăн, ЕФРЕМОВ капитанăн танкисчĕсем; КАГАН полковникăн, ПЕШАКОВ полковникăн, ШЛЫЧКОВ майорăн, МАЗАЛОВ майорăн, МОИСЕЕНКО майорăн, МЫЦИК майорăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ПОЛЫНИНАН, МИРОНОВ полковникăн, ТИМОФЕЕВ полковникăн, ГРАЩЕНКОВ полковникăн, СУХОРЯБОВ полковникăн, ГАВРИЛЬЧЕНКО подполковникăн, ФАДИН майорăн летчикĕсем; ЛЕВИН подполковникăн, ЧИСТЯКОВ майорăн, БОЙКО майорăн, ПЯТЧИН капитанăн саперĕсем; БЕЛЕНКО полковникăн, ИГНАТЬЕВ подполковникăн, УЛЬЯНЕНКО майорăн, МИХТУНЕЦ капитанăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ДЕМБЛИН хулипе крепоҫне туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене «ДЕМБЛИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 26-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, инҫĕр ҫирĕм тăвата тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, ДЕМБЛИН хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ДЕМБЛИН хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТăВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлĕн 26-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНăРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота аякран кайса ҫавăрса илмелли ăста маневр тунипе, паян, июлĕн 27-мĕшĕнче, икĕ кун хушши ҫапăҫнă хыҫҫăн, Украинăн хуҫалăхпа политика тĕлĕшĕнчен паха центрĕ пулса тăракан область хулине — ЛЬВОВ хулине — чугун ҫулсен пысăк узелне, нимĕҫсен оборонин стратеги тĕлĕшпе питех те кирлĕ тĕреклетнĕ пунктне, Польшăн кăнтăрти районĕсем патне пымалли ҫулсене хӳтĕлесе тăраканскерне, штурмласа туртса илнĕ.

ЛЬВОВ хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче РЫБАЛКО генерал-полковникăн, танковăй ҫарсен генерал-полковникĕн ЛЕЛЮШЕНКăН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн НОВИКОВАН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн БЕЛОВАН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн АКИМОВАН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн МИТРОФАНОВАН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн СУХОВАН, ДОРОПЕЙ полковникăн, ТАБЕЛЕВ подполковникăн, БОГУНОВ подполковникăн, ИЛЮШИН подполковникăн, ГУДИМОВ полковникăн, ПАРХОМЕНКО полковникăн, СМИРНОВ полковникăн, ЛЮБАР подполковникăн, КОСТИН подполковникăн, ДРАГУНОВ майорăн танкисчĕсем; МОСКАЛЕНКО генерал-полковникăн, КУРОЧКИН генерал-полковникăн, ГРИГОРОВИЧ генерал-майорăн, ОЗИМИН генерал-майорăн, БОНДАРЕВ генерал-лейтенантăн, БУШЕВ генерал-майорăн, ШМЫГО генерал-майорăн, КУЗОВКОВ генерал-майорăн, САРАЕВ генерал-майорăн, КОСОЛАПОВ полковникăн, КУЧЕРЕНКО полковникăн, СТЕНИН генерал-майорăн, ЗУБОВ генерал-майорăн, ФЕДОСЕНКО полковникăн, КРАСАВИН полковникăн, МИЩЕНКО генерал-майорăн, ГУСЕВ генерал-майорăн, ЕЛИН полковникăн, ВАСИЛЕВСКИЙ полковникăн, КОРКИН полковникăн, КИСЕЛЕВ генерал-майорăн ҫарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ВАРЕНЦОВАН, артиллери генерал-майорĕн ЯРОВОЙАН, артиллери генерал-майорĕн ПОЛОСУХИНАН, МЕНТЮКОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн КАБАТЧИКОВАН, ОГАНЕСЯН полковникăн, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЬКОВАН, ГИНТОВ полковникăн, ШЕВЧЕНКО полковникăн, ЧУПРОВ полковникăн, ВОРОБЬЕВ полковникăн, ДОБРИНСКИЙ полковникăн, ПОРОВАТКИН полковникăн, БОРИСОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн ВОЛЬКЕНШТЕЙНАН, КУЛИКОВ полковникăн, КОЛЕСНИЧЕВ полковникăн, КОФАНОВ полковникăн, ТИТЕНКО полковникăн, ЧУВАЛ полковникăн, БАРСОЕВ полковникăн, КОЗЛОВ полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-майорĕн САМОХИНАН, авиаци генерал-майорĕн ПОЛБИНАН, авиаци генерал-майорĕн АРХАНГЕЛЬСКИН, авиаци генерал-майорĕн ГАЛУНОВАН, авиаци генерал-майорĕн УТИНАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн НАНЕЙШВИЛИН, авиаци генерал-майорĕн ГОЛОВНЯН, авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВАН, ЧУК полковникăн, АНИСИМОВ полковникăн, СЕМЕНКО полковникăн, БЫСТРОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-лейтенанчĕн ГАЛИЦКИН, АЛЕКСЕЕВ полковникăн, СЕРЕБРЯКОВ полковникăн, РЕВЯКИН полковникăн, БОНДАРЕВ подполковникăн саперĕсем; ҫыхăну ҫарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУЛЫЧЕВАН, ОСТРЕНКО полковникăн, ТАРУНИН полковникăн, ЕРЕМЕЕВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ЛЬВОВ хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене «ЛЬВОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 27-мĕшĕнче, 23 сехетре пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, инҫĕр ҫирĕм тăвата тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНăРИ 1-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, ЛЬВОВ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ЛЬВОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТăВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлĕн 27-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника ЗАХАРОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт ҫарĕсем, икĕ кун хушши ҫапăҫнă хыҫҫăн, паян, июлĕн 27-мĕшĕнче, промышленноҫăн пысăк центрне БЕЛОСТОК хулине — чугун ҫулсен паха узелне тата нимĕҫсен оборонин тĕреклетнĕ хăватлă районне, ВАРШАВА патне пымалли ҫулсене хӳтĕлесе тăраканскерне, штурмласа туртса илнĕ.

БЕЛОСТОК хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ГОРБАТОВ генерал-полковникăн, УРБАНОВИЧ генерал-майорăн, ЧУВАКОВ генерал-майорăн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорăн, ТЕЛКОВ полковникăн, ВЕРЕВКИН полковникăн, КУБАСОВ генерал-майорăн, КОНОВАЛОВ полковникăн, ПАНЧУК генерал-майорăн, МИХАЛИЦЫН полковникăн, НИКИТИН генерал-майорăн, МАСЛОВ генерал-майорăн, МОХИН генерал-майорăн, ГРЕКОВ полковникăн, ЯКИМОВИЧ генерал-майорăн ҫарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн СОКОЛЬСКИЙĔН, артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВАН, артиллери генерал-майорĕн ДЕГТЯРЕВАН, МЕДВЕДЕВ полковникăн, БЫЧЕВ полковникăн, КАНДИДАТОВ полковникăн, ДЕРГАЧ полковникăн, АЙРАПЕТОВ полковникăн, КИРЕЕВ полковникăн, СЫРОВАТКИН полковникăн, ВОЙЦЕХОВСКИЙ подполковникăн, УШАКОВ подполковникăн, ГОРОДНИЧИЙ подполковникăн, АЛИМБАЕВ майорăн, ПОПЛАВСКИЙ майорăн, МУРИНОВ подполковникăн, МАКАРЬЕВ подполковникăн, ЯСКЕВИЧ подполковникăн, КОРЫТКО полковникăн, КОВАЛЕВИЧ подполковникăн, ПРОСКУРИН майорăн, ДРАПКО полковникăн, МОСКАЛЕВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ШИРОБОКОВАН, АПАРИНОВ полковникăн, ЗИРКО подполковникăн, ВЕДЕХИН майорăн, ПЛАКСИН майорăн, РДЗИШВИЛИ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНАН, авиаци генерал-майорĕн ГЕТМАНАН, СМОЛОВИК полковникăн, ВУСС полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, ПОКАЕВА подполковникăн, КАЗАЧЕНКО подполковникăн, БОРДЕЕВ подполковникăн, ЕЛИСЕЕВ подполковникăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн БЛАГОСЛАВОВАН, инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн ЖИЛИНАН, АРЦЫШЕВСКИЙ полковникăн, ШИТИКОВ полковникăн, СИТКОВ подполковникăн, МАТОЧКИН полковникăн, КОЖИН майорăн саперĕсем; ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн МИШИНАН, БРОНСКИЙ подполковникăн, КУРАКОВ подполковникăн, ХИЛЬЧЕНКО подполковникăн, ШАПОВАЛОВ подполковникăн, КУРТУКОВ подполковникăн, ХОМЯКОВ полковникăн, ЖАРИКОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, БЕЛОСТОК хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене «БЕЛОСТОКСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 27-мĕшĕнче, 20 сехетре хамăр Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, инҫĕр ҫирĕм тăвата тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, БЕЛОСТОК хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, БЕЛОСТОК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТăВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлĕн 27-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНăРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, тăшмана ҫавăрса илмелли маневр туса тата фронтран атакăласа, паян, июлĕн 27-мĕшĕнче, Украинăн область центрне СТАНИСЛАВ хулине — пысăк чугун ҫул узелне тата нимĕҫсен Карпат тăвĕсем умĕнчи оборонин тĕреклетнĕ пунктне — туртса илнĕ.

СТАНИСЛАВ хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ГРЕЧКО генерал-полковникăн, ШЕВЕРДИН генерал-лейтенантăн, ЛАЗЬКО генерал-майорăн, АФОНИН генерал-майорăн, ВОРОЖИЩЕВ генерал-майорăн, ДРЕМИН генерал-майорăн, ПОДШИВАЙЛОВ генерал-майорăн, ПАХОМОВ полковникăн, ГЕРАСИМОВ полковникăн, ЯНКОВСКИЙ полковникăн, КОЧЕНОВ полковникăн, ИВАНЧУР полковникăн ҫарĕсем; артиллери генерал-майорĕн БРИЧЕНОКăН, НОВИКОВ полковникăн, ВОРОБЬЕВ полковникăн, БРОЗГОЛЬ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн ЖИБУРКУСАН, НИКУЛИН подполковникăн, ПОНОМАРЦЕВ подполковникăн, ШЕЛЕСТ подполковникăн, ТЕРЕХИН подполковникăн, КАРТАШЕВ майорăн, ЛОСКУТОВ майорăн, ПИСМЕРНОВ майорăн, КОВАЛЬ майорăн артиллерисчĕсем; танковăй ҫарсен генерал-майорĕн РАЙКИНАН, СТРЕЛЕЦКИЙ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн ВИТРУКАН, КУДРЯШОВ полковникăн, ВОЙТЕКАЙТЕС майорăн, МУСАТОВ майорăн, РОССМОТРОВ майорăн, СЕРИКОВ подполковникăн, МАРКОВЦЕВ подполковникăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн ТУПИЧЕВАН, АСТАПОВ полковникăн, ШИШОВ майорăн, ВОРОНОВ майорăн саперĕсем; БЕЛЯНЧИК полковникăн, ЖИЦ подполковникăн, МИШИН подполковникăн, МАРТЫНОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, СТАНИСЛАВ хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене «СТАНИСЛАВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 27-мĕшĕнче, 21 сехетре хамăр Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, инҫĕр ҫирĕм тăвата тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, СТАНИСЛАВ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, СТАНИСЛАВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТăВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлĕн 27-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЕРЕМЕНКăНА

БАЛТИКА ТАРАХĔНЧИ 2-мĕш фронт ҫарĕсем, наступление вăйлатса пырса, паян, июлĕн 27-мĕшĕнче, ДАУГАВПИЛС (ДВИНСК) хулине тата РЕЗЕКНЕ (РЕЖИЦА) хулине — паха чугун ҫул узелĕсене тата нимĕҫсен Рига хули енчи оборонин тĕреклетнĕ хăватлă пункчĕсене — штурмласа туртса илнĕ.

ДАУГАВПИЛСПА РЕЗЕКНЕ хулисене туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче МАЛЫШЕВ генерал-лейтенантăн, КАЗАКОВ генерал-лейтенантăн, КОРОТКОВ генерал-лейтенантăн, ЮШКЕВИЧ генерал-лейтенантăн, СОЛДАТОВ генерал-майорăн, АРТЮШЕНКО генерал-майорăн, МИХАЙЛОВ генерал-майорăн, КЛЕШНИН генерал-майорăн, БРАНТКАЛН генерал-майорăн, ФЕДЮНЬКИН генерал-майорăн, НОВОСЕЛЬСКИЙ генерал-лейтенантăн, ХОРУЖЕНКО генерал-майорăн, ВАХРАМЕЕВ генерал-майорăн, ПЕРЕВЕРТКИН полковникăн, АРТАМОНОВ полковникăн, ФЕДОРОВ полковникăн, ВВЕДЕНСКИЙ генерал-майорăн, ЧИНКОВ генерал-майорăн, ВЛАДИМИРОВ полковникăн, ТОРОПЧИН полковникăн, КАЛНИН полковникăн, МОСКАЛИК генерал-майорăн, КУЛЕШОВ генерал-майорăн, ГРИБОВ генерал-майорăн, СТУЧЕНКО генерал-майорăн, МАКАРЬЕВ полковникăн, МОСКАЛЕНКО полковникăн, БОЛТРУЧУК полковникăн, ТИМОШЕНКО полковникăн, КОВАЛЕНКО полковникăн ҫарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн, НИЧКОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн НЕСТЕРЕНКăН, артиллери генерал-майорĕн ШАЛУНОВАН, артиллери генерал-майорĕн НЕСТЕРУКăН, артиллери генерал-майорĕн ХАРЛАМОВАН, артиллери генерал-майорĕн КУЛИКОВАН, артиллери генерал-майорĕн АЛЕКСАНДРОВАН, ЛЕБЕДЕВ полковникăн, БЫКО-ЯНКО полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн, ПИСАРЕВ полковникăн, ПЕТРЕНКО полковникăн, СЕРДОБОЛЬСКИЙ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн ЧЕРНЯВСКИН, ФИЛИППОВ полковникăн, ЛЕБЕДЕВ полковникăн, НИКОЛАЕВ полковникăн, САХНО генерал-майорăн, ЮДИНОВ полковникăн, КОРНЕВ майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн НАУМЕНКăН, авиаци генерал-майорĕн РУБАНОВАН, авиаци генерал-майорĕн ДАНИЛОВАН, ЛИТВИНОВ полковникăн, ТРУШКИН полковникăн, КОРПУСОВ полковникăн, ВОЕВОДИН полковникăн, ЩЕННИКОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн ПИЛИНЕЦАН, инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн РАЗВОЗОВАН, инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн КРИСАНОВАН, СОКОЛОВ полковникăн, БЕЛОЗЕРЦЕВ подполковникăн, ЛЕЩЕВ полковникăн саперĕсем; ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн ПАНИНАН, ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн ЛАГОДЮКăН, ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн ДЕНИСОВАН, АКИМОВ полковникăн, МАЛЕНКО подполковникăн, КИЯНОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ДАУГАВПИЛС (ДВИНСК) хулипе РЕЗЕКНЕ (РЕЖИЦА) хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаҫсене «ДВИНСКИ» тата «РЕЖИЦСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 27-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, инҫĕр ҫирĕм тăвата тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Балтика тăрăхĕнчи 2-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, ДАУГАВПИЛСПА РЕЗЕКНЕ хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ДАУГАВПИЛСПА РЕЗЕКНЕ хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТăВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи июлĕн 27-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми Генералне БАГРАМЯНА

БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт пырса çапнă хыççăн, паян, июлĕн 27-мĕшĕнче, ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулине — Балтика тăрăхне Хĕвелтухăç Пруссипе çыхса тăракан çулсен пысăк узелне — туртса илнĕ.

ШАУЛЯЙ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОБУХОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн РОДИОНОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн АСЛАНОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн СКОРНЯКОВĂН, КРЕМЕР полковникăн, ГОРЯЧЕВ полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЮДИНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн БЕЛЫЙĂН танкисчĕсем; КРЕЙЗЕР генерал-лейтенантăн, ЧАНЧИБАДЗЕ генерал-лейтенантăн, БАКУНИН генерал-майорăн, МИССАН генерал-лейтенантăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорăн, ТОЛСТОВ генерал-майорăн, ПОТАПЕНКО генерал-майорăн, БОБРАКОВ генерал-майорăн, САМОХВАЛОВ генерал-майорăн, КУЛЯКО полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ХЛЕБНИКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ТЕЛЕГИНĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн СТРЕЛЬБИЦКИН, артиллери генерал-майорĕн БАЖАНОВĂН, артиллерисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ПАПИВИНĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БЕЛЕЦКИН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УШАКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ИВАНОВĂН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОСАРЕВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн БАЖЕНОВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн БРЫНЗОВĂН саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн БАБНИНĂН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн КОКОРИНĂН, ЧЕРНОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçсенчен палăртса хăварас тесе, ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ШАВЛИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 27-мĕшĕнче, 24 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ШАУЛЯЙ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ШАУЛЯЙ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, пурне чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 27-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, НАРВА хули районĕнче наступлени пуçласа ярса, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ, шалалла кăçене каякан оборонине татнă та, çавăрса илмелли ăста маневр туса тата фронтран атакăласа, июлĕн 26-мĕшĕнче НАРВА хулипе крепоçне штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 20 пункта йышăннă. Вăл шутра — НАРВА-ЙЫЭСУ, МЕТСКИ, МЕРЕКЮЛЯ, ПУХКОВА, ВОДАВА, ПОЭМУРРУ, КРЕНГОЛЬМ, УДРИЯ, САМОКРАС ятлă пысăк ялсем тата САЛДИНО-ЯМ, АУВЕРЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ПСКОВ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 30 пункта туртса илнĕ. Вăл шутра — ПОДГРАМЬЕ, ЗАРЕЧЬЕ, ГНИЛИНО, ШЕВЕЛОВО, УСАДИЩЕ, ПОРТОВИК, ЕРЛЫКИ, РИСАВА ятлă пысăк ялсем тата КУПРАВА ятлă чугун çул станцийĕ.

ПАНЕВЕЖИС хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — халăх пурăнакан МЕШКАДАУКИС, ПУШАЛОТАС, КАТКУНЫ, РОГАЛИН, СМИЛЬГИ, ШАДОВ, БЕЙНАРОВО, ВОДОКТЫ, КРАКИНОВО ятлă пысăк пунктсем тата БЕРЧУНАЙ, ГУССТОНИС, ДОПИСОНАЙ, ЛАБА, БЕРНАТОНЯЙ, СКАЙСГИРИС, НЕДИКОМЯЙ, ПУШАЛОТАС, ВАЙТКУНАЙ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт атакăланă хыççăн, ДЕМБЛИН (Ивангород) хулипе крепоçне — пысăк чугун çул узелне тата нимĕçсен Висла шывĕ çинчи оборонин тĕреклетнĕ хăватлă пунктне — штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра БЯЛА-ПОДЛЯСКА хули, ПУЛАВЫ хули, САРОКОМЛЯ, КОЦК, ЛЫСОБЫКИ, МИХУВ, БАРАНУВ, БАЗАНУВ, РЫКИ, БАЛТУВ ОСИНЫ, КЛЕМЕНТОВИЦЕ ятлă пысăк ялсем тата БЯЛА-ПОДЛЯСКА, РЫКИ, СТАВЫ, ГОЛОМА, ВУЛЬКА-ПРОФЕЦКА, ПУЛАВЫ, КЛЕМЕНТОВИЦЕ, НАЛЕНЧУВ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ЛЮБЛИН хулин комендантне МОЗЕР ГИЛЬМАР генерал-лейтенанта тыткăна илнĕ.

ЗАМОСТЬЕ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—НЕМЕНИЦЕ, ПЯСКИ ШЛЯХЕЦКЕ, ИЗБИЦА, ВЕЛОНБА, ЗАМОЙСКЕ, ТУЖИНЕЦ, КОРЫТКУВ, ДОМОСТАВА, ЯСТКОВИЦЕ, УЛЯНУВ ятлă пысăк ялсем тата ИЗБИЦА, РУСКЕ ПЯСКИ, ЗАВАДА, КЛЕМЕНСУВ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ЛЬВОВ хули районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ çарĕсене пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă.

СТАНИСЛАВ хули енче пирĕн çарсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, Станислав облаçĕнчи район центрĕсене — БУРШТЫН, ТЛУМАЧ, ТЫСМЕНИЦА, НАДВОРНАЯ, ДЕЛЯТИН хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ЧАГРУВ, МЕДЫНЯ, СТУДЗЯНКА, ВОЛЧИНЕЦ, ЧЕРНЕЮВ, ВОЛОСУВ, ПАРИШИ, ЗАЖЕЧЕ ятлă пысăк ялсем тата МАРТЫНУВ, БУРШТЫН, БЕДНАРУВ, ПАВЕЛЬЧЕ, ЯМНИЦА, ТЫСМЕНИЦА, ХРЫПЛИН, ТЫСЬМЕНИЧАНЫ, ЦУЦЫЛУВ, НАДВОРНАЯ, ДЕЛЯТИН, ЛАНЧИН ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлла улшăнусемех пулман.

Июлĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 88 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 35 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ТИЛЬЗИТПА ВАРШАВА ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Июлĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци тăшманăн Тильзит тата Варшава чугун çул узелĕсенчи çар эшелонĕсем çине тата çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Тильзит чугун çул узелĕнче бомбăсем тӳрех пырса тивнипе нимĕçсен 4 çар эшелонĕ çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Боеприпас склачĕ тата горючи склачĕ сирпĕнсе кайнă. Бомбăсем пăрахнипе пула 40 пушар тапран тухнă, çав пушарсем чугун çул узелĕн пĕтĕм территорине ярса илнĕ. Пирĕн летчиксем çав пушарсене 150 километртан курнă.

Бомбăсем пăрахнипе пула Варшава чугун çул узелĕнче пушарсем тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă. Чугун çул составĕсем çуннă. Уйрăмах Варшавăпа юнашар ларакан Прагăри чугун çулсем çинче вăйлă пушарсем пулнă.

☆ ☆ ☆

Ленинград фрончĕн çарĕсем Нарва хули районĕнче наступлени пуçласа янă. Артиллерипе авиаци хăватлăн атакăласа хатĕрленĕ хыççăн совет пехотинецĕсем Нарва шывĕ урлă унăн вăрринче каçнă та Нарва-Йыэсу ятлă яла туртса илнĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах, пирĕн Нарва шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи плацдарма йышăнса тăракан чăçсем, çавăрса илмелли маневр туса, тăшмана кăнтăртан пырса çапнă. Нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă. Вара пирĕн çарсем Нарва хулипе крепоçне штурмласа туртса илнĕ. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, совет боецĕсем Эстони Совет республикин халăх пурăнакан 20 пунктне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Нарва хулишĕн пынă çапăçусенче тăшманăн темиçе пин салтакĕпе офицерĕ вилсе е аманса пĕтнĕ. 60 тупă, 35 миномет тата пĕр бронепоезд пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Псков хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чăçсем, тăшманпа çапăçса, 10 километр малалла куçнă та Куправа ятлă чугун çул станцине туртса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр чăçри подразделенисем, çавăрса илмелли маневр туса, пĕр тĕреклетнĕ пунктри нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 вилли выртса юлнă. 3 боеприпас склачĕ тата, унсăр пуçне, 15.000 авиабомба тытса илнĕ.

* * *

Паневежис хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чăçĕсем, малалла куçса, Шауляй хулинчен 35 километрта ларакан шоссе çулĕсен узелне Шадов ятлă пункта туртса илнĕ. Тăшман танкĕсемпе пехоти темиçе хутчен те контратакăсем тунă, анчах та тăшмана пысăк çухатусем кӳрсе, каялла сире-сире ыватнă.

Пирĕн штурмовой авиаци нимĕç çарĕсен çапăçури речĕсене тата çапăçу хирне пыракан резервĕсене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем пăрахса тата пăшалсемпе, пулеметсемпе персе, 60 автомашина пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 2 боеприпас складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Пирĕн танковăй тата пехота соединенийĕсем, хăйсен çулĕсем çинчи тăшман гарнизонĕсене пĕтере-пĕтере тăкса, 40 километр малалла куçнă, нимĕçсен Висла шывĕ çинчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан Демблин хули патне тухнă. Нимĕçсен гарнизонĕ хытă хирĕç тăнă, анчах та совет çарĕсем, татăклăн пыра-пыра çапса, нимĕçсен гарнизонне аркатса тăкнă. Демблин (Ивангород) хулипе крепоçне тăшманран тасатнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн чăçсем Висла шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче Пулавы хулине туртса илнĕ. Нимĕçсенчен 33 тупă, 23 паровоз тата тĕрлĕрен вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ 340 вагонпа платформа тытса илнĕ. 1.580 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Брест хулинчен 35 километр хĕвеланăçнерехре ларакан Бяла-Подляска хули районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Брест хулинчен хĕвеланăçнелле каякан çулйĕрсене мĕнле пулин те хăйсен аллинчех тытса хăварма хăтланса, нимĕçсем кунти çапăçăва пысăк вăйсем кĕртсе янă. Пирĕн чăçсем тăшмана сирсе пăрахнă та Бяла-Подляска хулине туртса илнĕ. Кун каçичченхи çапăçусенче 4.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Львов хули районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ çарĕсене пур енчен те пыра-пыра çапнă. Хула çумĕнчи пунктсенче тата хула тулашĕнче те хаяр çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем пĕр чарăнмасăр контратакăсем тăваççĕ, анчах та артиллерипе минометсен тата пулеметсен вăйлă вут-çулăмĕ вĕсен çулне пӳлсе тăрать. Совет боецĕсем штурмлакан ушкăнсем туса çапăçаççĕ, вĕсем гитлеровецсене дотсенчен, çуртсенчен тата подвалсенчен çапа-çапа кăлараççĕ. Çапăçу пыракан вырăнсем тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен виллисемпе тулнă. Нимĕçсен 35 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Трофейăсем нумай, вăл шутра 150 тупă, туртса илнĕ. 2.700 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшманăн Финн заливĕнчи суднисене штурмласа, бомбăсем пăрахса пыра-пыра çапнă. Хуралта çӳрекен карапа, пĕр тральщике, хуралта çӳрекен 3 катера тата хăйĕллĕн çӳрекен 2 баржăна шыва путарнă.

Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене ĕç тупса парасси тата вĕсене пурнăçра пулăшасси

ВЦСПС секретариачĕ профсоюз организацийĕсене предприятисенче ĕçлекен инвалидсене (Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене) шута илме тата производствăра вĕсен ĕçĕпе тĕрĕс усă курнине тĕрĕслесе тăма хушнă.

Фабрикăпа завод комитечĕсен Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене столовăйсенче, магазинсенче, сыватакан учрежденисенче тата ытти çĕрсенче те чи малтан йышăнмалла тумалла.

ВЦСПС секретариачĕ Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене санаторисене яма путевкăсем уйăрса парать. (ТАСС).

Çутĕç работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта çутĕç работникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу республикăри шкулсен 1943—44 вĕренӳ çулĕнчи ĕçĕсен итогĕсем тата çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси çинчен Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕн Макаров юлташăн докладне сӳтсе яврĕ.

Макаров юлташ хăйĕн докладĕнче партипе правительство шкул ĕçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшнине палăртрĕ, республикăри шкулсем вăрçă вăхăтĕнчи висçĕмĕш вĕренӳ çулĕнче тунă çитĕнӳсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ, ĕçри çитменлĕхсене критиклерĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче совет шкулĕн пурнăçĕнче пăлла улшăнусем пулчĕç. Хуласенчи шкулсенче арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăммăн вĕрентмелле туни, вĕренӳ ĕçĕнче ăмăртăва пăрахăçа кăларни, пĕлӳ пахалăхне цифрăсемпе хакламалла туни тата ытти чылай мероприятисем, — çаксем пурте шкулсен ĕçне çĕклеме, вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатма пулăшаççĕ. ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕн решенийĕсем те пăлла вырăн йышăнса тăраççĕ. Шкул директорĕсемпе учительсем, çутĕç работникĕсем шкул ĕçне партипе правительство кăтартса панă пек çĕнетсе йĕркелессишĕн тимлĕн кĕрешсе, иртнĕ вĕренӳ çулĕнче сахал мар çитĕнӳсем тунă.

Республикăри нумай районсенче пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентмелли закона ăнăçлăн пурнăçлаççĕ. Елчĕк районĕнче пĕтĕм вĕренӳ çулĕнче пуçламăш шкулсенче пурĕ те 5 ача кăна вĕренме пăрахнă. Унта çутĕç работникĕсем, вĕсене партипе совет организацийĕсем куллен пулăшнипе, пурне те вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртес ĕç тавра колхоз хресченĕсене мобилизациленĕ. Районри шкулсем 1943 çулти çуркуннех вĕри апат организацилеме апат-çимĕç базине тума тăрăшнă. Вĕсем çуракинче 101 гектар тырпул акса хăварнă. Вĕренӳ çулĕ тапхăрĕнче вара вĕри апат çитерессине 37 шкулта организациленĕ, пурĕ 4843 ачана апатлантарнă. Шкул ачисене пулăшмалли фондран 271 ачана тумтирсем, 384 ачана ата-пушмаксем тата нумай ачасене апат-çимĕç, укçа парса пулăшнă. Пурне те вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Вăрмар, Шăхасан, Комсомольски тата ытти чылай районсем те начар мар ĕçленĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр районсенче шкул çулне çитнĕ ачасене вĕренĕве явăçтарас тĕлĕшпе питех те сӳрĕк ĕçленĕ. Канаш районĕнчи шкулсен руководителĕсемпе çутĕç работникĕсем пурне те вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме колхозри общественноçа мобилизацилес ĕçе хакламан. Çавна пула вĕренӳ çулĕнче пуçламăш шкулсенчен кăна 265 ача вĕренме пăрахнă. Шăмăршăпа Кувакино районĕсенче те çавăн евĕрлех пулнă.

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем çакна кăтартса пачĕç: шкул директорĕсемпе учительсен тата çутĕç работникĕсен ытларахăшĕ совет шкулĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе партипе правительство йышăннă мероприятисене тĕрĕс ăнланса илнĕ тата вăл мероприятисене пурнăçа кĕртессишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Арçын ачасен Шупашкарти пĕрремĕш шкулĕнчи вăтам шкулта географипе вĕрентекен учительница Ляшко юлташ хăйĕн урокĕсене яланах тĕплĕн хатĕрленсе лайăх ирттернĕ. Тĕрĕслӳ вăхăтĕнче вара 16 вĕренекенрен начар паллă илекенсем пачах пулман. Кун пек примерсем нумай илсе кăтартма пулать.

Анчах та шкул ĕçне партипе правительство хушнă пек йăлтах çĕнетсе йĕркеленĕ теме çук-ха. Нумай шкулсенче учительсен ĕçне тĕрĕслессине, вĕренӳпе воспитани ĕçне ертсе пырассине тивĕçлипе йĕркелемен. Вĕренӳ ĕçĕнче ăмăртăва пĕтернине тĕрĕс ăнланса илменнине те чылай çĕрте тĕл пулма пулать. Методика тĕлĕшĕнчен пулăшас, вырăс чĕлхине, историе, чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçре те çитменлĕхсем чылай-ха.

Доклад тăрăх пренире ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Иванов, Сергеева (хĕрачасен Шупашкарти пĕрремĕш шкулĕн директорĕ), Ведина (Сĕнтĕрти вăтам шкул), Авдеев (Çутĕç Халăх Комиссариачĕ), Кириллова (Шупашкар хулинчи çутĕç пайĕ), Волков (Комсомольски район) тата ытти нумай шкул директорĕсемпе учительсем тата çутĕç работникĕсем тухса каларĕç. Вĕсем шкулсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, вĕсене сывăх вăхăтрах пĕтерме пахă сĕнӳсем пачĕç, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене палăртрĕç. Учебниксем, вĕренӳ хатĕрĕсем кӳрсе килесси тата хатĕрлесси, шкул çуртĕсене юсасси, вутă хатĕрлесси сӳрĕк пырать т. ыт. те.

Канашлу пĕтес умĕн ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ.

Канашлура Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссин Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Логвин, Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Евлампьев юлташсем пулчĕç.

Канашлу республикăри учительсене чĕнсе каланине йышăнчĕ.

Канашлу Сталин юлташ патне саламлă телеграмма яма йышăнчĕ.

—⊙—

И. Е. Репин çуралнăранпа 100 çул тултарнине хисеплени

СССР Совнаркомĕ вырăсен аслă художникĕ И. Е. Репин çуралнăранпа 100 çул тултарнине асăнса ирттерме пĕтĕм Союзри Комитет тунă.

Комитет председателĕ — А. Герасимов. Комитет членĕсем—художниксем, скульпторсем, артистсем, кино тĕлĕшпе ĕçлекенсем, пурĕ 44 çын.

Комитет çак юбилей тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине, сăмахран, Репин çинчен çырнă материалсене пичетлесе кăлармаллине, унăн произведенийĕсен выставкине тумаллине, научнăй сесси пухмаллине, савăнăçлă каçсемпе пухусем туса ирттермеллине тата ыттисене те палăртса хурать.

Юбилее 1944 çулхи августăн 5-мĕшĕнче ирттереççĕ. (ТАСС).

„Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçин виçĕ çулталăкĕ" ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă

Политика литературин государство издательстви Совет Информаци Бюровĕн «Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçин виçĕ çулталăкĕ (вăрçăн çарпа политика итогĕсем)» ятлă пĕлтерĕвне уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă.

Çав кĕнекене 300.000 экземпляр пичетленĕ. (ТАСС).

Германири лару-тăру

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен вăрттăн ĕçлекен «Атлантик» ятлă радиопередатчикĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи генералитечĕн чи паллă представителĕсем пуçласа янă Гитлера хирĕçле кавар лашăва Гиммлер халĕ те пусарса лартайман-ха. «Ку движени, — тет «Атлантик» радиопередатчик,—питĕ хăватлă движени».

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçатăн Берн хулинчи корреспонденчĕ çакăн пек хыпар панă: «Дипломати ушкăнĕсенчен пĕлтернĕ тăрăх, Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви нимĕçсен ют çĕршывсенчи дипломати представителĕсенчен кашнинченех вĕсем хăйсем Гитлера парăнса тăни çинчен çĕнĕрен присяга пама ыйтнă. Çапла пĕлтереççĕ: Карлсруэ тата Мангейм хулисенче Гитлера хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Германи хулисенчи гарнизонсене нумайĕшне Гитлера вĕлерме тапăннă хыççăн васкасах фронта янă. Вĕсен казармисене эсэсовецсен çарĕсем йышăннă.

Германин „шанчăксăр" офицерĕсемпе генералĕсене тытса хупни тата пере-пере пăрахни

ЖЕНЕВА, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Сюисс» хаçат çапла пĕлтерет: Лионпа Безансон хулисенче Германи çарĕн чăçĕсемпе эсэсовецсем хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Дипломати ушкăнĕсенче илтсе пĕлнĕ тăрăх, пысăк командирсен вырăнĕсене йышăнса тăракан офицерсене арестленĕ, çавăн пекех тата Мюнхенра, Штутгартра, Бременра, Линцра тата ытти хуласенче те салтаксене нумай тытса хупнă. Хăтра политика, çар, экономика тата полици тĕлĕшпе пĕтĕм власть Гиммлер аллинче тăрать. Çавăн пекех Гиммлер пур фронтсенчи вăрçă ĕçĕсене те контроллесе тăрать.

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Англири радиопередатчикĕ çапла пĕлтерет: Гиммлер Германи çарне малалла тасатса пырать. Юлашки хыпарсем тăрăх, Германин Балтика тăрăхĕнчи çарĕсен командующине Линдеман генерала, çавăн пекех тата Буш генерала та тытса хупнă. Вĕсен вырăнне Гитлер штабĕнчи эсэсовец-генералсене лартнă.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк Таймс» хаçатра çапла çырнă: Берн хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 19-мĕшĕнче иртен пуçласах, урăхла каласан, Гитлера вĕлерме тапăниччен пĕр кун маларах, нимĕç офицерĕсене майортан пуçласа фельдмаршала çитиччен хытă «тасатма» пуçланă. Çак «тасату» халĕ те пырать. Чи вăйлă «тасату» июлĕн 21-мĕшĕнче пулнă. Çав кун Венăри «Гауэсауз» ятлă тĕрмере 4 фельдмаршала персе пăрахнă, вĕсен хумашачĕсене пĕлмеççĕ. Венăра, Мюнхенра, Кенигсбергра, Магдебургра, Берлинра тата Прагăра Гиммлер тарçисемпе самаях вăйлă тытăçусем пулапула иртнĕ. Гиммлер тарçисем Гитлера тапăнассине пĕлсе оппозицие пĕтерсе лартма хăтланнă пулнă. Июлĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа «тасатуран» хăтăлса юлнисем Германирен тухса тарма хăтланнă. Хальхи вăхăтра Германи ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви нимĕçсен ют çĕршывсенчи ... Шведсен «Морген тиднинген» хаçачĕ çапла çырать:

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Морген тиднинген» хаçачĕ çапла çырать: «Германирен пĕлтернĕ тăрăх, Шахт кĕрӳшне, посольство советникĕ пулнă барон фон Шефенберга, вăрçа хирĕç каласнăшăн март уйăхĕнче тытса хупнăскерне, халĕ персе пăрахнă. Шахт çинчен нимĕн палли те çук. Унăн Бранденбургри имение эсэсовецсен отрячĕсем йышăннă. Çавăн пекех тата Рундштедтăн чи çывăх сотрудникне — Францири пĕр бронетанковăй дивизи командирне барон фон-Шеппенбург генерал-полковника та персе пăрахнă. Унсăр пуçне тата фон-Махенфельд генерала тытса хупнă. Малалла унпа мĕн пулнине пĕлмеççĕ. Венгерсен Германин главнăй ставкинче командировкăра пулнă Якубец генералне каялла Будапешта янă, мĕншĕн тесен вăл нимĕç генералĕсен пăлхавне хутшăннă. Модель фельдмаршал, Гитлер патне вăл хăй Гитлера парăнса тăма пулни çинчен ĕнентерсе, хут çырса янă. Линдеман генерал-полковник, Шернер генерал тата Кессельринг фельдмаршал çавăн пек ĕнентерекен хутсем çырса яман».

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Цюрих хулинчен ют çĕршыв сыннисен ушкăнĕсенчен пĕлнĕ хыпара парать. Çав хыпарта çапла каланă: Венăри казармăсен кил хушшинче эсэсовецсем Германи çарĕн 19 офицерне персе пăрахнă. Çав офицерсем хăйсен пострисалтакĕсене, вĕсен ĕçне эсэсовецсем мĕнле те пулин хутшăнас пулсан, хирĕç тăма приказ панă, кирлĕ пулсан, алăри хĕçпăшалпа та усă курма хушнă пулнă.

ГЕРМАНИ ÇАР ЧĂÇĔСЕМПЕ ЭСЭСОВЕЦСЕН ÇАРĔСЕМ ХУШШИНЧЕ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ТЫТĂÇУСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: «Белградран панă шанчăклă хыпарсем тăрăх, унта Германин çар чăçĕсемпе эсэсовецсен çарĕсем хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Аслă офицерсенчен нумайĕшĕсем нимĕçсен Балканри çарĕсен командующин генерал-фельдмаршалăн фон-Вейхсăн приказĕсене пăхăнма килĕшмен, мĕншĕн тесен Гитлера вĕлерме тапăннă хыççăн фон-Вейхс Гитлера чунтан парăнса ĕçлесе тăма пулни çинчен заявлени çырса панă. Çав тытăçусем хыççăн халăх пурăнакан Дединье районне эсэсовецсен çарĕсем хупăрласа илнĕ. Дединье районĕнче Германин Балканри çарĕсен штабĕ тăрать. Белград хулинче нимĕçсен 46 офицерне тата ытти военнослужащисене те персе пăрахнă.

ГЕРМАНИРИ ЕÇСЕМ ВЕНГРИЕ ШИКЛЕНТЕРЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Нюа Даглигт Аллеханда» ятлă хаçачĕ çапла çырать: нимĕçсен вăрттăн ĕçлекен радиопередатчикĕ пĕлтернĕ тăрăх, Будапешт хулинче Гитлера хирĕçле пысăк демонстрацисем пулса иртнĕ. Хумханусене çарсен вăйĕпе пусарса лартнă. Вырăнти халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай пулнă.

Финляндире вăрçа хирĕç пулса иртнĕ демонстрацисем

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Арбетарен» хаçат çапла пĕлтерет: Гитлера вĕлерме тапăннă хыççăн Або хулинче Финлянди çак вăрçăра Германи майлă пулса вăрçнине хирĕçлесе демонстраци пулса иртнĕ. Демонстрацири халăха салатса яма пынă полици хĕçсемпе те штыксемпе усă курма тытăннă. Демонстрацири халăх полицейскисене чулсемпе, кирпĕчсемпе пенĕ, вĕсем: «Тĕп пулччăр нацистсем!» тесе кăшкăрнă. Çавăн пек демонстрацисемех Хельсинки тата Таммерфорс хулисенче те пулса иртнĕ.

ГИТЛЕРА ВĔЛЕРМЕ ТАПАННА ЧУХ НЕ АМАННА ИКĔ ГЕНЕРАЛ ВИЛНĔ

ЖЕНЕВА, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра çапла пĕлтернĕ: нимĕçсен сывлăш-çар вăйĕсен генеральнăй штабĕн начальникĕ генерал-полковник Гюнтер Кортен тата арми генеральнăй штабĕн оперативнăй отдел сотрудникĕ генерал-майор Гейнц Бранд Гитлера вĕлерме тапăннă чухне йывăр аманнă пирки вилнĕ.

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕçсен тата икĕ генералне вĕлернĕ

ЖЕНЕВА, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян гитлерла командовани официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕç çарĕсен пĕр группин командующине Шнеллер генерал-лейтенанта тата тепĕр армин штаб начальникне Тресков генерал-майора вĕлернĕ.

Хĕвелтухăç Пруссири лару-тăру

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Морген тиднинген» хаçачĕ çапла пĕлтерет: Гитлер Хĕвелтухăç Пруссири, Данцигри, Померанири тата Хĕвеланăç Пруссири çарсене пĕр командовани пăхăнтарасси çинчен приказ панă. Çав çарсен командующийĕ пулма Модель фельдмаршала лартнă. Эйзенбек генерала Гитлер «саботажпа партизансен вăрçине пĕтерме хушнă».

Хĕвелтухăç Пруссири поездсем унтан урăх çĕре куçаракан хĕрарăмсемпе тата пĕчĕк ачасемпе тулса ларнă. Çавăн пирки вара кунти хĕрарăмсемпе ачасене Пиллау тата Мемель порчĕсем урлă тинĕспе те урăх çĕре куçараççĕ. Çав портсенче тăракан суднăсем çинчи пур вырăнсене те малтанах илсе хунă. Хура биржăра çав суднăсем çине лармалли билетсене питех те пысăк хакпа сутаççĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 24-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: тип çĕр çинчи çарсем кĕрешекен вырăнта нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 25-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: июлĕн 25-мĕшĕнче ирхине союзниксен çарĕсем Кан хулинчен кăнтăртарахра Фалез патнелле каякан çулăн икĕ енĕпе те атакăсем пуçласа янă. Малтанлăха илнĕ хыпарсем тăрăх, кăштах çитĕнӳсем туни пур.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсене тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 25-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Июлĕн 25-мĕшĕнче ирхине союзниксен çарĕсем Кан хулинчен кăнтăртарахра наступлени тума тытăннă хыççăн йывăр çапăçусем пуçланса кайнă. Тăшман çапăçăва хăйĕн танкĕсемпе пехотине кĕртсе янă та хытă хирĕç тăрать, çапах та пирĕн наступлени малаллах пырать, çапăçусем Мэсюр-орн тата Тилли-ла-Кампань районĕнче пыраççĕ.

Хĕвеланăçĕнчи секторта кăнтăрла тĕлĕнче пирĕн çарсем Сен-Ло хулинчен хĕвеланăçнерехре атака пуçласа янă. Пирĕн тип çĕр çинчи çарсене çапăçура союзниксен авиацийĕ, тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапса, пулăшса тăнă. Пирĕн самолетсем тăшман çине бомбăсем нумай пăрахнă.

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 26-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Сен-Ло хулинчен хĕвеланăçнерехри районра союзниксен çарĕсем анлă фронтпа 3000 ярд малалла куçнă, Перье хулипе Сенло хули хушшинчи çула темиçе тĕлте татнă. Кан хулинчен кăнтăртарахра çаплах хаяр çапăçусем пынă. Кун каçиччен тăшман нумай хутчен танксем пулăшнипе контратакăсем тунă. Союзниксем хăйсем унччен туртса илнĕ пунктсене пурне те хăйсен аллинче çирĕп тытса тăраççĕ.

Июлĕн 25-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕн соединенийĕсем кунĕпех тип çĕр çинчи чăçсене вăйлăн пулăшса пынă, çавăн пекех тата тăшман çулйĕрĕсене атакăланă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН НОРМАНДИРИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян 3.000 самолет, вĕсенчен 1.500-ĕшĕ американецсен йывăр бомбардировщикĕсем, Нормандире çапăçнă, вĕсем американецсен 1-мĕш армине тăшманпа çапăçма пулăшнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июлĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех американецсен илемлĕ, темиçе сăрпа ӳкернĕ çĕнĕ фильмне

«Д Ж У Н Г Л И»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене кассăра ирхине 10 сехетрех сутма пуçлаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00282 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.